# ÇАМРĂК ЖУРНАЛИСТ

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçа кĕрет*



## Кам вăл журналист?

**Май уйăхĕнчен тытăнса редакци Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе ятарлă кăларăм – «Çамрăк журналист» страница кăларма тытăнать. Уйăхсерен кун çути куракан кăларăмра пуçласа журналист ĕçне кӳлĕнме хатĕррисен шкулне йĕркелĕпĕр, вĕренӳ учрежденийĕсен пурнăçне анлăн çутатăпăр, шкул ачисен ĕçĕсене – корреспонденцийĕсемпе информацийĕсене, сăввисемпе калавĕсене, сăн ӳкерчĕкĕсене, ытти хайлавне пичетлĕпĕр.**

Часах çуллахи каникул кунĕсем пуçланаççĕ. Шкулсенче вĕренекенсен пушă вăхăт унччен хинчен ытларах пулать. Апла пулсан пурне те район хаçачĕпе туслă пулма, тачăрах çыхăну тытма чĕнетпĕр.

Чăннипе вара кам-ха вăл журналист? Журналист – массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçченĕ. Журналист массăллă информаци хатĕрĕсем валли информаци пухассипе, ăна туса хатĕрлессипе, редакцилессипе тата йĕркелессипе ĕçлет. Журналист – калаçма юратакансен тата нумай пĕлме тăрăшакансен профессийĕ. Тĕрлĕ çынпа калаçма, вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлме, тĕрлĕ мероприятие хутшăнма тивет. Нумай журналист пурăна киле паллă çын тата общество шухăшĕн лидерĕ пулса тăрать.

Журналистăн тивĕçĕ – обществăшăн, ыттисемшĕн интереслĕ пулса тăракан информацие шыраса тупасси тата ăна хатĕрлесси. Пухнă кăтартусене тĕпе хурса хыпарсем, статьясем, репортажсем пичетленеççĕ, радио тата телевидени передачисем эфира тухаççĕ. Журналистсем хăйсен материалĕсенче пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çине тимлĕх уйăрттарма, обществăлла дискуссисем йĕркелеме, ку е вăл событи пирки тĕрлĕ шухăшлăха кăтартса пама пултараççĕ. Хăйĕн ĕçне пурнăçланă май, журналистăн тăтăшах тухса çӳреме, тĕрлĕ çынпа тĕл пулса клаçма, командировкăсене кайма, интервьюсем илме, сăн ӳкерчĕксем тума тивет. Ку вăл чăннипех те активлă çынсен интереслĕ профессийĕ пулса тăрать.

Пĕлтерĕшлĕ пысăк изданисенче вăй хуракан хăш-пĕр журналистăн ĕçĕ-хĕлĕ хăрушлăхпа та çыхăннă. Енчен те журналист преступленисене тĕпчессипе ĕçлет, хĕрӳ точкăсене е çапăçусем пыракан вырăнсене тухса çӳрет, общевăри тата политикăри çивĕч ыйтусене çутатать пулсан.

Журналист пулас тесен мĕн тумалла-ха? Журналистсем хушшинче ятарлă журналист пĕлĕвне илменнисем те çук мар. Нумайăшĕ ытти сферăран та хаçат-журнал, радио-телевидени ĕçне кӳлĕнет. Журналистсене хатĕрлекен ятарлă аслă вĕренӳ учрежденийĕсем те çук мар. Калăпăр, вĕсем хушшинче чи палли – М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн журналистика факультечĕ. Хамăр республикăра журналист профессине И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче илме май пур.

Шкулта вĕренекенсен вара журналист ĕçне шкул çулĕсенченех тытăнма май пур. Çав тĕллевпе йĕркелерĕмĕр те ĕнтĕ район хаçатĕнче «Çамрăк журналист» ятпа уйăхсерен пичетленекен ятарлă кăларăма. Çапла вара сирĕн журналист ĕçне алла илессипе малтанхи утăмсене паянах тума май пулать.

Апла пулсан хамăрăн çамрăк вулакансенчен – шкул ачисенчен хăйсен хайлавĕсене кĕтетпĕр. Çырăр, редакцие кĕрсе тухăр, шăнкăравлăр. Тĕрлĕрен темăпа çырма май пур, хăвăрăн ирĕк – шкул пурнăçĕ, интереслĕ мероприяти ирттерни, каникул кунĕсем, походра е экскурсире пулни, асаттесемпе асаннесене пулăшни т. ыт. те.

Шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен учительсем те вĕренекенсен çырас ăсталăхне аталантарма пулăшассинчен катара юлмаççĕ пулĕ тесе шанас килет.

## Айтăр-ха заметка çырар



Хаçатра пичетленекен материалсене, вĕсен тытăмне е жанрне кура, виçĕ тĕп ушкăна уйăрма пулать.

**Информаци материалĕсем.** Кунта заметкăсем, отчетсем, репортажсем кĕреççĕ. Кун пек материалсенче ку е вăл событи, факт, пулăм пирки çийĕнчех каласа пăраççĕ.

**Аналитика материалĕсем.** Статья, корреспонденци, журналист тĕпчевĕ, уçă çыру, тишкерӳ, рецензи. Кун пек материалсенче фактсене тарăннăн тишкерни, пĕтĕмлетӳ туни пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

**Художествăпа публицистика материалĕсем.** Вĕсен шутне тĕрленчĕксене, калаçусене, очерксене, фельетонсене, памфлетсене, пародисене, публицистика калавĕсене кĕртме пулать. Кун йышши материалсенче ытарлăх, кăмăл-туйăм, чĕлхе, стилистика енĕсем малти вырăна тухаççĕ. Конкретлă документлă факт хыçалти плана юлать.

Малаллахи кăларăмсенче хаçатпа çыхăну тытма кăмăллисене хаçатра ытларах тĕл пулакан материалсен жанрĕсем пирки тĕплĕнрех каласа парăпăр. Пуçласса вара чи ансаттинчен – заметкăран тытăнăпăр. Апла пулин те кашни жанрăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. Çавăнпа та пуçласа заметка çырма хатĕрленекен пулас корреспондентăн та пĕлмелли çук мар: заметкăсене мĕнле стильпе хатĕрлеççĕ-ха, вĕсен тĕллевĕ мĕнле?

Телевиденипе паракан «Что? Где? Когда?» передача пуррине пĕлетĕр вĕт-ха. Шăпах çак ыйтусем çине хурав пама тивĕç те ĕнтĕ информаци заметки. Калăпăшĕпе кун пек материалсем – чи пĕчĕкисем. Ытларах чухне 5 – 6 предложенирен те ытла мар. Корреспондентăн тĕллевĕ – вулакана мĕн, ăçта, хăçан пулса иртни пирки оперативлă, уçăмлă, кĕскен каласа парасси.

Эпир хаçат страницине мĕн тума уçатпăр-ха, радио е телевизор мĕн тума ятратпăр-ха? Чи малтанах – çак кунсенче мĕн пулса иртнине пĕлме. Журналист пире ун пирки мĕнле каласа панине сăнатпăр. Вĕсенчен пĕри пире ытларах килĕшет, тепри вара – сахалрах. Çакă вара ытларах вăл хăйне мĕнле тытнинчен е калаçнинчен те мар, пирĕн пĕлессин туйăмне епле тивĕçтерме пултарнинчен килет.

Журналистран вулакансем мĕн кĕтеççĕ-ха? Чи малтанах – хыпар. Пур пĕлтерĕве те хыпар шутне кĕртме май çук. Хыпар вăл общество пĕлтерĕшлĕ пулма, çĕнĕлĕхпе, халиччен пулманнипе çыхăнма тивĕç. Иккĕмĕшĕнчен, фактăн логикине уçса парас пулать. Журналистăн асăннă хыпар пирĕн пурнăçри ытти пулăмпа çыхăнса тăнине палăртмалла. Виççĕмĕшĕнчен, пулăма май пур таран кĕскен уçса пани пĕлтерĕшлĕ. Пирĕнтен кашниех кĕске вăхăт хушшинче май пур таран ытларах информаци илесшĕн. Тăваттăмĕшĕнчен, оперативлăх. Чăннипех те, тахçанах историе юлнă пулăм пирки никамăн та вуласа пĕлес кăмăл пулмĕ.

Информаци чăнлăхĕ пирки те манма юрамасть. Суя информаци, фактсене пăсса кăтартни журналистăн сумне те хушмасть, хаçат авторитетне те сиен кӳрет.

Халĕ вара район хаçачĕн страницисене уçса пăхăр-ха. Заметкăсем ытларах чухне «Республикăра», «Кĕскен», «Районта: ĕнер, паян, ыран» тата ытти рубрикăпа пичетленеççĕ. Малашне вара хаçатра «Шкулсенчен хыпарлаççĕ», «Шкул хыпарĕсем», «Манăн пĕрремĕш заметка» рубрикăсем те çураласса кĕтетпĕр.

## Пирĕн пурнăçшăн хăйсене хĕрхенмен

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа кăçал 74 çул çитрĕ. Хаяр вăрçă 28 миллион ытла çыннăн пурнăçне татнă. Вăл шутра – манăн виçĕ ватă асаттенне те.

Тăваттăмĕшĕ, Федор Николаевич Николаев, киле таврăннă. Вăл – Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕ. Кивьял Шушат ялĕнче хресчен çемйинче 1912 çулта çуралнăскер, мĕн пĕчĕкренех уй-хирте хастар ĕçлеме, йывăрлăха çĕнтерме хăнăхнă. Тăван çĕршыва малалла аталантарма вара хут пĕлекен çынсем кирли те уççăнах палăрнă. Ашшĕ-амăшĕ ăна учитель профессине алла илме тесе Етĕрнери педагогика техникумне вĕренме янă. Çапла техникумран вĕренсе тухнă хыççăн, вăхăт иртнĕçемĕн, çамрăк специалист пултаруллă вĕрентекен, хастар комсомолец, общество ĕçĕсене активлă хутшăнакан çын пулса тăрать, ялти çамрăксем хушшинче хут пĕлеслĕхе сарас тесе нумай тăрăшать.

1938 çулта Федор Николаевича Хĕрлĕ Çара ăсатнă. Хĕвел анăç Украинăра йĕрке тăвассине хутшăннă, финн вăрçинче сапер пулнă, çулсене минăсенчен тасатнă.

Манăн ватă асаттен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германин вăйлă çарне хирĕç çапăçма тивнĕ. Çапла пĕрре асаттесен отделенине тăшмансем унка илнĕ. Самолетсемпе, танксемпе кĕрешекенсем умĕнче совет салтакĕсем вăйсăр пулнă. Салтаксем окопра пулнă, унка хĕссе нимĕç танкĕсем вĕсем урлă каçса кайнă. Çак çапăçура манăн асатте чĕрĕ юлнă. Хамăрăннисем патне тухма тăрăшнăскер, нимĕçсене парăнман. Икĕ эрне хушши тĕрлĕ курăк çикелесе пурăннă. Фронт линийĕ урлă каçса хăйĕн чаçне, Полтава хули патне çитсе тухма пултарнă. Вăл миномет чаçĕн командирĕ пулнă.

1942 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Калинин фронтĕнче йывăр аманнă. Пĕр уйăха яхăн госпитальте сипленнĕ хыççăн минометчиксен дивизионне таврăннă. Тăшмана хирĕç Висла шывĕ патĕнче Варшава, Штаргард, Массов, Франкфурт хулисене ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. Федор асатте Берлина штурмланă, рейхстага илнĕ çĕрте минометчикрах çапăçнă.

Мăн асаттен паттăрлăхне çĕршыв правительстви Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, «За боевые заслуги», «За освобождение Варшавы», «За освобождение Берлина» медальсемпе палăртнă. Асаттен пĕтĕмпе сакăр тĕслĕ Тав çырăвĕ, вăл шутра Германирен, Польшăран та пулнă.

Федор Николаевич вăрçа Берлинта вĕçленĕ. Демобилизаччен Берлинти оккупаци çарĕнче пулнă. Киле 1945 çулхи ноябрь уйăхĕнче таврăннă.

Мирлĕ вăхăтра хăйĕн профессийĕпе малалла ĕçе кӳлĕннĕ. Вăл ронора инспекторта тăрăшнă, 1947 çултан тытăнса Турайри вăтам шкулта историпе общество учителĕ пулнă, завучра вăй хунă.

Пирĕн лăпкă та ырă пурнăçшăн ватă асаттесем хăйсен пурнăçне хĕрхенмен. Пирĕн вĕсен паттăрлăхне нихăçан та манмалла мар, тĕллевсене чуна парса тӳрĕ кăмăлпа пурнăçламалла.

**Анастасия КАДЫКОВА,**
**11 класс вĕренекенĕ.**
**Муркаш шкулĕ.**

## Шкул хаçатне кăлараççĕ



**Паллах, ача шкула вĕренме, пĕлӳ илме çӳрет. Анчах та шкулти пурнăç вĕренӳпе кăна чикĕленмелле мар – ачан тĕрлĕ енлĕ аталанмалла, хăйĕн пултарулăхне туптамалла.**

**Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Муркашри вăтам шкул вĕренекенĕсем шăпах çапла шутлаççĕ. Вĕсем тĕрлĕ мероприятие хутшăнаççĕ, анчах та ачасен пĕрлехи пысăк ĕç те пур: редакци коллегийĕ шкул хаçатне кăларса тăрать.**

Ачасем палăртнă тăрăх, çак ĕçе шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен тата ачасене тĕнчери художество культурипе паллаштаракан Елена Ефанова ертсе пырать. Хаçат редакцийĕнчи пекех, ачасен тĕп редактор пур. Вăл 10-мĕш класра вĕренекен Екатерина Ефанова **(сăн ӳкерчĕкре сылтăмри).** Хаçат материалĕсем валли сăн ӳкерчĕксем хатĕрлессипе ытларах Роман Моисеев тата Никита Волков тимлеççĕ. Мария Германова, Евгения Казамбаева тата Аделина Тихонова **(сулахайран сылтăмалла)** – çамрăк корреспондентсен йышĕнчен. Вĕсем хаçата тĕрлĕ заметка, интервью, статья çыраççĕ.

Малтанхи çулсенче те Муркаш шкулĕнче шкул хаçатне кăларнă, анчах вăл тăтăш тухса тăман. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнченпе çамрăк журналистсем вĕренӳ чĕрĕкĕнче пĕрре хаçат кăларма тĕв тунă та сăмаха тытаççĕ.

Паллах, чи малтанах хаçатра вĕсем шкулти пурнăçа çутатаççĕ, шкулти мероприятисем пирки каласа кăтартаççĕ. Районти социаллă пурнăç пирки, ачасем хутшăнакан тĕрлĕ акци пирки çырма та манмаççĕ. Акă нумаях пулмасть кун çути курнă «Улица Детства, дом №38» шкул хаçатĕнче Аслă Çĕнтерӳ уявĕ пирки те интереслĕ материал çырма тăрăшни палăрать.

Хаçата хальлĕхе А4 форматпа кăлараççĕ. Шкулти информаци стенчĕ çинче унăн кашни страницине вуламалла вырнаçтараççĕ, кунсăр пуçне кашни класа пĕршер экземпляр салатса параççĕ. Шкулта чылай ача вĕренет, çавăнпа та кашни класра мĕн пулса иртни пирки тӳрех пурте пĕлсе те ĕлкĕреймеççĕ. Хаçатра çырса панă материалсемпе вара хаваспах паллашаççĕ.

Çамрăк журналистсем каланă тăрăх, çуллахи каникул вăхăтĕнче вĕсен «специализацийĕпе» те шкул çумĕнчи профиль лагерĕ уçăлĕ. «Хамăрăн пултарулăха каникулта та атлантарма май пулнăшăн эпир савăнатпăр кăна», – теççĕ шкул ачисем. Вĕсен йышĕнче вара малашне хăйĕн пурнăçне журналистикăпа çыхăнтарма ĕмĕтлисем те пур. Апла çамрăксене ăнăçусем сунатпăр.

**Манăн пĕрремĕш сăвă**

## Тимлĕхе ан çухат

Кăмакара вут чĕртсен
Хăварма юрамасть пĕччен.
Кăвар урайне ӳксен
Сиксе тухать инкек иккен.
Шăрпăк тытнине пулах
Алхасса пĕчĕккисем
Пушар тунă тĕслĕхсем
Тĕл пулаççĕ нумаях.
Пирус туртнă пирки те
Хăш чух пушар алхасать.
Çын çывăрса кайнипе
Çут тĕнчерен уйрăлать.
Мĕн чуль инкек шăрпăкран
Тимлĕх çухатсан куран.
Ваттисем ахаль каламан:
– Вăрăран юлать, юлмасть вутран.

## Пушар

Çур çĕр иртни иккĕре
Тимĕр çапни илтĕнчĕ.
Çывăракан çынсене
«Хĕрлĕ автан» вăратрĕ.
Мунчи çунать кӳршĕсен,
Çулăмĕ çӳле каять.
Вут пӳрт çине каясран
Кашни хытă пăлханать.
Пĕр çамрăкăн пурнăçĕ
Çак пушарта сӳнчĕ-çке.
Илсе кайрĕ вут алли,
Пур-ши унран хăрушши?

**Елена ПАВЛОВА,**
**Шурча шкулĕн вĕренекенĕ.**

**Кăларăма В. Шапошников, Н. Николаева, Р. Макарова, А. Белов хатĕрленĕ.**

**Ыран – СПИДа хирĕç кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун**

## СПИДа сиплекен эмел çук

**СПИДа хирĕç кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери куна 1988 çултанпа Пĕтĕм тĕнчери Сывлăх сыхлав организацийĕ сĕннипе паллă тăваççĕ. Паллах, çак кун уяв мар, анчах та вăл хăрушлăха хирĕç пурне те пĕрле кар тăма ыйтакан кун шутланать. Çавăнпа та патшалăх, общество тата медицина организацийĕсем чир пирки каласа парса çак ыйту çивĕччине пĕлтереççĕ, диагностика тата асăрхаттару мероприятийĕсене ирттереççĕ.**

«СПИД – вирус чирĕ, организмра аталанса вăйланса пырать, çавăнпа та çын тĕрлĕ инфекцие хирĕç кĕрешейми пулать», – палăртать Муркаш район тĕп больницин поликлиника ертӳçи Галина Федотова.

Çынна вилĕм патне çитерекен çак вируса 1981 çулта америка ăсчахĕсем тупса палăртнă. Унтанпа вăхăт сахал мар иртнĕ пулин те, хальлĕхе чире çĕнтермелли эмел шухăшласа кăларайман-ха. Раççейре те чир эпидеми шайнех çитнĕ, çавăнпа та унран сыхланмалли чи ансат меслет – кашни çын харпăр хăй тĕллĕн асăрханни.

Кашни çын ВИЧ/СПИД чирĕ пуррипе çуккине тĕрĕслеттерме пултарать. Шупашкарта, сăмахран, СПИДа тата инфекци чирĕсене асăрхаттаракан республика центрĕ ĕçлет. Унта тĕрĕслеве аноним мелĕпе те иртереççĕ.

Сăмах май, центрăн официаллă сайтĕнче кăсăклă информаци чылай. Информаци бюллетенĕсенчен республикăра уйăхсерен ВИЧ-инфекци тупса палăртнă çынсен шучĕ сахал маррине те пĕлме пулать. Акă кăçалхи январь уйăхĕнче кăна 24 çыннăнне çак инфекцие пуçласа тупса палăртнă, вăл шутран пĕр çын – Муркаш районĕнчен. Февральте пирĕн районти тепĕр çыннăнне те çак хăрушă инфекци пуррине регистрациленĕ. Март – апрель уйăхĕсенче кун пек факт пулман.

Çак чирпе чирлисене регистрацилеме тытăннăранпа Чăваш Енре 805 çын вилнĕ, вĕсенчен 242-шĕ – СПИД тапхăрĕнче.

Бюллетеньре Муркаш районĕн кăтартăвĕсем çапларах. Иртнĕ çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлне районта ВИЧ-инфекциллĕ 45 çынна регистрациленĕ: вĕсенчен 9 çын вилнĕ (вĕсенчен 3-шĕ – СПИДа пула), 36 çын пурăнать. Каласа хăвармалла, 2018 çулта районта 6 çыннăнне ВИЧ-инфекци пуçласа тупса палăртнă. Палăртмалла, СПИД ВИЧ-инфекци чирĕн юлашки тапхăрĕ шутланать. Кун пек чухне ВИЧ-инфекциллĕ çыннăн ытти инфекци чирĕсем тата усал шыçă чирĕсем хăвăрт аталанаççĕ.

СПИДа тата инфекци чирĕсене асăрхаттаракан республика центрĕн уйрăмĕн ертӳçи Ирина Кочерова пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра республикăра ВИЧ-инфекциллĕ 2305 çын пурăнать.

Статистика инфекци ытларах чухне ар çыхăнăвĕ тата шприц урлă лекнине çирĕплетсе парать. Апла пулсан пурин те асăрханмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Демографи**

## «Юбилейлă» ача

Муркаш районĕ кăçал хăйĕн 75 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çакна май çулталăкĕпех тĕрлĕ мероприяти иртет.

Нумаях пулмасть вара район администрацийĕн ЗАГС пайĕнче районта кăçал çуралнă 75-мĕш ачана регистрацилерĕмĕр. Москакасси ялĕнче пурăнакан Людмилăпа Евгений Черновсен çемйинчи Ярослав ывăлĕ «юбилейлă» ача пулчĕ. Хăйĕн пĕрремĕш документĕпе пĕрлех асăнмалăх парнене те тивĕçрĕ. Çемьере вăл хăйĕн икĕ аппăшĕпе пĕрле çирĕп сывлăхлă ӳсессе шанатпăр.

## Пĕрремĕш йĕкĕреш

Çемьере ача çурални – яланах телей, пысăк савăнăç. Апла пулсан çемьере харăсах икĕ ача çут тĕнчене килни икĕ хут телей тата тем пысăкăш савăнăç.

Çак савăнăçпа нумаях пулмасть Шуркасси ялĕнчи Кудряшовсен çемйине саламлама тӳр килчĕ. Вĕсен çемйинче кăçал районти пĕрремĕш йĕкĕреш çуралчĕ. Пепкисем валли ашшĕ-амăшĕ Елисей тата Есения ятсем суйланă.

Паллă кунпа Кудряшовсене район администрацийĕн пуçлăхĕн салам открыткипе тата парнепе чысларăмăр. Тăватă ача пăхса ӳстерме вĕсене çирĕп сывлăх тата чăтăмлăх сунатпăр.

**Е. ИВАНОВА,**
**ЗАГС пайĕн ертӳçи.**

**Сывлăх**

## Чирсенчен сыхланма

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕн Европăри регион бюровĕн пуçарăвĕпе Раççейре çулсеренех иммунизаци эрни иртет. Ытти чухне те, çав эрне вăхăтĕнче вара уйрăмах, специалистсем инфекци чирĕсенчен сыхланма пулăшакан меслетсем пирки çынсене ытларах пĕлтерессипе тимлеççĕ.

Хальхи вăхăтра вакцинацие хутшăнса çын хăйне тĕрлĕ инфекци чирĕнчен хӳтĕлеме пултарать: дифтери, столбняк, полиомиелит, хĕрлĕхен, урни чирĕнчен, грипран, В вирус гепатитĕнчен, ыттинчен те. Палăртмалла, çак чирсем çынна яланлăхах инвалид туса хăварма е кун-çула татма та пултараççĕ.

Çавăнпа та çынсене иммунизаци программине явăçтарма пăрахни чылай хăрушă инфекци чирне чĕртсе тăратакан сăлтав пулса тăрĕ.

Хальхи вăхăтри вакцинăсем çын организмне микробсен тата вируссен сиенĕнчен хӳтĕлеççĕ. Çавна май çын хăш чире асăрхаттаракан прививка тунă, унпа чирлемест. Çынсен хушшинчи эпидеми тăнăçлăхĕ пултăр тесен, çынсен 95 процентне яхăн иммунизацине явăçтармалла.

Муркаш районĕнче çынсене вакцинацие явăçтарнипе иртнĕ çулсенче хĕрлĕхен, дифтери, столбняк, эпидеми паротитне регистрацилени пулман.

**Г. ФЕДОТОВА.**
**поликлиника ертӳçи.**

**Полици хроникинчен** 12+

### Укçа вăрлассишĕн ташлană

Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи пĕр чиперук унччен те суд йышăнăвĕпе кукăр алă ятне илтнĕ. Анчах та вăхăт самаях иртсен ку ĕçе тепĕр хут аса илме шухăшланă. Çапла вара каçалапа Матьăк клубне «ташă каçне» тухнă хĕрарăм тепĕр хĕрарăмăн сумккинчен 5500 тенкĕ кăларса илет.

Çак преступление полицейскисем çийĕнчех уçса пама пултарнă. «Пуçаруллă» хĕрарăм тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă.

### Пĕрре каланипе тăн кĕмен

Шаптак ялĕнчи арçынна кăçалхи январьте кăна-ха суд йышăнăвĕпе транспорт хатĕрĕпе çӳрес праваран хăтарнă. Апла пулин те вăл, çулталăк çурă руль умне ларма юраманнине пăхмасăрах, каллех руль умне ӳсĕрле ларса çула тухнă. Ахăртнех çул-йĕр правилисене пăхăнмалли çинчен шухăшламан. Çĕрле инспекторсем асăрхамаççĕ тесе шухăшланă пулас. Анчах та никама та мар, хăйнех япăх тунă.

Çак тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Урă мар водителе каллех суд тенкелĕ кĕтет: наказани хальхинче тата çирĕпрех пуласси куçкĕрет.

### Хурăнĕ те пур, юманĕ те

Паха йывăçа ялта пурăнакан çын темĕнле ĕçе те яма пултарать: ялти кил картишĕнче йĕри-тавра хуралтă. Çапла нумаях пулмасть Ильинка участок лесничествинче Оринин ялĕ çывăхĕнчи тата Кашмаш ялĕ çывăхĕнчи кварталсенче ӳсекен йывăçсене каснине асăрханă. Пĕр çĕрте – юмансем касса кайнă, тепĕр вырăнĕнче – хурăнсем каснă. Шутласа пăхнă тăрăх, йывăç касакансем республикăн Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерствине юмансем каснипе 30 пин тенкĕ майлă, хурăнсем каснипе 65 пин ытла тенкĕ тăкак кӳнĕ.

Вăрман касакансем тĕлĕшпе уголовлă ĕçсем пуçарма хатĕрленеççĕ.

### Малтан ĕçтернĕ, кайран вăрланă

Çынна эрех ăсран кăларать, теççĕ те, çын ӳсĕррипе усă куракансем те сахал мар. Юнашар ӳсĕр çын пулнине курсан, вĕсен ăсĕ çивĕчленсе каять тейĕн.

Çĕньял Хуракассинчи пĕр хĕрарăм çавăн йышши правур çынсен йышĕнчен пулнă пулас. Хăйĕн килĕнче арçынпа эрех ĕçнĕ хыççăн, хайхискер арçыннăн шăлавар кĕсйинчи укçине кăларса илет. Арçынĕ унччен пĕрре мар судпа айăпланнăскер пулнине те хĕрарăм шута илнех пулĕ. Полицейскисем ĕçе тӳрех уçса пама пултарнăран, хĕрарăм вăрланă укçана та çийĕнчех тавăрса панă. Çапах та преступлени пулнă, апла наказани те пулмалла.

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Профилактика ĕçĕ-хĕлĕ**

## Кайăк грипĕнчен асăрханар

Паянхи куна, Чăваш Республикинчи пекех, Муркаш районĕнче те кайăк грипĕнчен тивĕçлипе сыхланса пыратпăр. Анчах çакă пирĕн патăмăрта асăннă чир çук тенине пĕлтермест. 2018 çулта республикăра уйрăм килти хушма хуçалăхсенчи чăх-чĕп кайăк грипĕпе чирленĕ тĕслĕхсем пулчĕç. Çакăнта республика территорийĕпе тискер кайăк-кĕшĕк вĕçсе иртмелли маршрутсем пулни те, шыв кайăкĕсем пирĕн тăрăхри юханшывсенче йăва çавăрни те чир пуçаруçисене хамăр патăмăра кĕртме çул уçса панине манмалли çук.

Кайăк грипĕ, килти хушма хуçалăхри, обществăлла секторти чăх-чĕппе пĕрлех, çыншăн та палăрмаллах хăрушă чир. Маларах каланине шута илсе тата пĕрлехи хăрушлăхран сыхланса, кăçал районта килти хушма хуçалăхсенчи 48 пин чăх-чĕп тĕлĕшпе профилактика иммунизацийĕ иртерме палăртатпăр. Вакцинăланă хыççăнхи тĕрĕслев те тивĕçлĕ шайра пулĕ.

Ял хуçалăхне аталантарма пăхнă патшалăх программи шайĕнче чăх-чĕп валли вакцина çителĕклĕ килсе çитрĕ ĕнтĕ. Уншăн федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрнă. Çак вакцина чăх-чĕпсен А типлă кайăк грипне хирĕç кĕрешме иммунитета вăйлатать. Вăл 12 уйăха тăсăлать.

Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветеринари специалисчĕсем çак кунсенче кайăк грипĕ тĕлĕшпе ятарлă профилактика ĕçне кӳлĕнчĕç.

Кунта уйрăм сăмах – чăх-чĕпе район территорине илсе килекен предпринимательсем тĕлĕшпе. Вĕсен çакна валли тивĕçлĕ органсенчен ирĕк илни кирлĕ. Илсе килекен чăх-чĕпе вăхăтлăх тытмалли вырăнсене малтан ятарлă комиссипе тĕрĕслесе хак памалла, кайăк-кĕшĕк сывлăхне тĕпчемелле. Кайăк-кĕшĕк тытмалли пӳлĕмсене тата вĕсене уçăлтарса çӳретмелли лаптăксене тата чăх-чĕпе турттармалли автотранспорта вăхăтра дезинфекцилемелле.

Чăхсем чирленине тата вĕсем йышлă вилме пуçланине асăрхасан пĕр тăхтаса тămасăр районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцине пĕлтермелле.

**Л. БОЯРИНОВА,**
**районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци пуçлăхĕн çумĕ.**